Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 86 (4655) *1998 çулхи июль (утă) уйăхĕн 31-мĕшĕ, эрнекун* *Палăртнă хакпа.*

## Çыранçи Чаллăри конференци

Июлĕн 25-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери тутарсен обществăлла центрĕн Çыранçи Чаллин уйрăмĕ Сара Садыкова ячĕпе хисепленекен концерт залĕнче наци политикăпа практика конференцине ирттернĕ. Унта Хусанти тата ытти вырăнсенчи тутарсен обществăлла центрĕсен представителĕсем, çаплах республикăри хуласемпе районсен представителĕсене чĕннĕ. Конференцие 372 делегат хутшăннă. Кун йĕркине тутар халăх культурин, историн, литературин, пичечĕн тата телевиденийĕн, вĕренÿпе воспитанин актуаллă ыйтăвĕсене кĕртнĕ. Тутарстан Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Фандас Сафиуллин, Сурия Усманова, Мускаври профессор, историк Агдес Бурганов, тутар наци юхăмĕн лидерĕ Заки Зайнуллин, Камскри политехника институчĕн ректорĕ Асфандияр Хайруллин, Пушкăртстанти тутарсен обществăлла центрĕн председателĕ Закира Хакимова, Тутарстан Республикин тава тивĕçлĕ юрăçи Вафира Гиззатуллина тата ыттисем тухса каласнине кăсăкланса итленĕ.

## Уй-хирсенчен пĕлтерессĕ

### Кама тырă, вĕсене вара улăм

Хресченсен хуçалăхĕсен "Рассвет" ассоциацийĕнче 60 гектар йышăнакан пăрçа хирĕнче çак кунсенче ĕç хĕрÿ пынă. Унта иртен тытăнса çĕрлеччен моторсен сасси шăпланман: çĕр ĕçченĕсен тĕллевĕ пĕрре пулнă - тухăçа вăхăтлă та тăккаласăр пухса илмелле.

Çак ял çыннисем вара хастар ĕçлеме пултарассĕ. Кăçалхи тырпул вĕсемшĕн уйрăмах хаклă, çавăнпа та ăна пĕр пĕрчине хăвармасăр пуçтарса кĕртме тăрăшассĕ. Василий Семакаевпа Фанис Тухватуллин комбайнерсем, çаплах Нурвахит Маняпов ĕçе хăвăрт та кал-кал пурнăçланă. Кăçалхи çула кура вĕсем 752 центнер пăрçана питĕ кĕске вăхăтра пухса илнĕ.

Кунта йăлана кĕнĕ тăрăх, рассветовецсем ĕçе комплекслă йĕркеленĕ. Комбайнерсем тухăça пухса илсенех вĕсене Касым Сатдаровпа Наиль Бикиев трактористсем улăштарнă. Вĕсем мĕнпур улăма уй-хиртен пуçтарса илнĕ, хуçалăхра кăçал пурте юрăхлă пулĕ. Çавăнпа та çапла йышăннă: пăрçа улăмне пĕр çул ÿсекен курăксемпе хутăштарса сенажа хывмалла.

Çапла майпа тырçи хĕрсе пырать. Хуçалăх ĕçченĕсем çурхи ытти культурăсем ĕлкĕрессе чăтăмсăр кĕтессĕ.

С.ХАЙРУЛЛИНА.

### Сенаж хываççĕ

Кăçал çанталăк типĕ тăнипе выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлеме питĕ йывăр пулнине пăхмасăр, Хафизов ячĕпе хисепленекен хуçалăх ĕçченĕсем пысăк активлăх кăтартса вăй хураççĕ. Вĕсем тăрăшнипе пурĕ 4000 центнер утă купаланă. Хальхи вăхăтра выльăх апачĕ хатĕрлекенсем сенаж хываççĕ. Хирте Иван Муртазинпа Евгений Чернов "Полесье" комбайнсемпе ĕçлеççĕ. Симĕс массăна траншейăсем патне турттараççĕ, пурĕ 631 тонна сенаж хывнă ĕнтĕ.

### Акă вĕсем, тырçи паттăрĕсем

"Сĕнче" хуçалăхри **Александр Михайлович Зайчиков** ЖРБ жаткăллă "Нива" комбайнпа ыраш çулнă çĕрте смена нормине 140 процент пурнăçлать.

* * *

"Заветы Ильича" хуçалăхри **Владимир Михайлович Исаев** выльăх апачĕсем хатĕрлессинче хастар ĕçлет - КСК агрегатпа вăл 285 гектар çинчи хутăш курăксене çулнă.

* * *

Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацири **Павел Иванович Варламов** паян та хуçалăхра малти вырăна тытса тăрать - 1400 центнера яхăн тырă çапнă.

### Чикĕсенче - çĕнĕ аншлагсем

Район ятне улăштарнăранпа темиçе уйăх та иртрĕ ĕнтĕ, анчах та район чиккинче пуринче те аншлагсене улăштарса пĕтереймен-ха, тивĕçлĕ паллăсем лартмалли çĕнĕ çулсем те хушăнчĕç.

Хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин çакна шута илсе, кирлĕ çĕре аншлагсем лартма предприятисемпе организацисем тăрăшма тивĕçли çинчен постановлени йышăннă. Вĕсене 9 ял территорийĕсенче тата 13 çул участокĕсенче вырнаçтарĕç.

### КВН вăййи малалла пырать

Иртнĕ эрнере Элмет ялĕн культура çуртĕнче КВН черетлĕ вăййи пулнă. Çав кун Кислев, Анат Нурлат, Çирĕклĕ ялĕсен командисем хăйсен тавçăрулăхĕпе ăсталăхне иккĕмĕш хут кăтартрĕç. Амзяпа Элмет ялĕсен представителĕсем вара пĕрремĕш хут тĕл пулчĕç. Вăййăн пĕр пайне "Татарстан" телерадиокомпанин журналисчĕсем "Чулпан" передачăра кăтартма ÿкерсе илнĕ.

### Бригада çула тухнă

Тырçи тапхăрĕнче çĕр ĕçченĕсемшĕн кăна мар, ытти профессисен представителĕсемшĕн те, çав шутра районти культура çурчĕ çумĕнче йĕркеленĕ ятарлă бригадăшăн та яваплă кунсем çитеççĕ. Пултарулăх артисчĕсенчен, суту-илÿ, аптека ĕçченесенчен, парикмахерсенчен тăракан бригада ял çыннисене тивĕçтерме тата ăсталăхĕпе савăнтарма тухса кайнă.

Чи малтан бригада Мамăкри тырпул пухса илекенсем патĕнче пулнă, вĕсем ăна савăнса кĕтсе илнĕ. Çитес çывăх вăхăтра вăл Чулпанта, Питтимĕрьелĕнче, Салтакъелĕнче пулса курма шутлать. Бригада членĕсем ял ĕçченĕсен кăмăлне çĕклеме, вĕсене нумай ырă та çутă минутсем парнелеме тăрăшассĕ.

### Тараватлă сутуçă

*1984 çулта Пĕкĕлмери училищĕрен вĕренсе тухнă хыççăн Нинăна Тĕкĕрмелĕнчи магазина ĕçлеме янă. Райпо ертÿçи ăна пĕр вăхăтрах сутуçă та, заведующи те пулса ĕçлеме хушнă. Хĕр хăйне шаннине тÿрре кăларнă. Вăл ырă кăмăллă та тараватлăскер. Нина тавар туянакансемшĕн яланах тăрăшать, магазина халăха кирлĕ таварсем илсе килет. Çавăнпа унăн таварçаврăнăшĕ те ытти ялсенчи магазинсеннинчен лайăхрах.*

*Нинăпа Владимир мăшăрĕ икĕ ача пăхса ÿстерессĕ. Владимир тăван хуçалăхра вăй хурать.*



*Н.Азизов сăнÿкерчĕкĕ.*

*Ÿкерчĕкре: Тĕкĕрмел ялĕнчи магазин сутуçи Нина Тимофеева.*

## * Республика хыпарĕсем

### Шкула кайма çулла хатĕрлен

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланиччен вăхăт пур пулин те, Хусанти картонпа полиграфи таварĕсен фабрикинче ăна кĕтсе илме хатĕрленеççĕ ĕнтĕ.

Кашни кун кунта 500 пин тетрадь туса кăлараççĕ. Ку хăйне майлă рекорд шутланать. Кунне çур миллион тетрадь кăларакан фабрикăсем Раççейре нумай мар, Атăл тăрăхĕнче пачах та çук. Хакĕ те ытти фабрикăсемпе танлаштарсан йÿнерех. Пĕр тетрачĕн палăртнă хакĕ - 22 пус. Фабрикăра 12 листлă тетрадьсенчен пуçласа 96 листли тарана туса кăлараççĕ. Юлашки çул хушшинче вĕсен тулашри сăнсăпачĕ те улшăнчĕ: халĕ офсет машинипе пичетленине кура вĕсем хитре, тĕрлĕ тĕслĕ хуплашкаллă тухаççĕ.

Халĕ фабрикăн представительствисем Элметре, Пĕкĕлмере, Çырчаллăра, Елабугăра, çавăн пекех кÿршĕллĕ Пушкăрт республикинчи Уфара тата Стерлитамакра пур. Çывăх вăхăтра Раççейĕн тĕп хулинче - Мускавра та уçăлмалла.

### Кăлпасси: çĕнĕ сорт

"Казанская" чăх-чĕп фабрикинче çĕнĕ кăлпасси цехĕ уçнă. Ăна чăх ветчини, "Пресненская" кăлпасси йышши сортсенчен пĕрремĕш тата иккĕмĕш категориллĕ чăх какайĕнчен ĕне ашĕ хушса хатĕрлеççĕ.

Сăмах май каласан, кунта ĕне ашĕ те хăйсен, мĕншĕн тесен чăх-чĕп фабрикин хушма хуçалăх та пур. Чăх фаршĕнчен çавăн пекех "Ивановская" кăлпасси те тăваççĕ.

Смена хушшинче пĕр тоннăна яхăн кăлпасси хатĕрлеççĕ. Ăна Зеленодольскпа Хусана ăсатаççĕ.

## КУН хыççăн КУН

### Панкрута тухма пултараççĕ

Алтай крайĕнчи вунвун предприяти çывăх вăхăтрах патшалăха налук тÿлемен пирки панкрута тухма пултарать.

Хальхи вăхăтра налук инспекцийĕсенче чи пысăк предприятисенчи укçа-тенкĕпе çыхăннă лару-тăрăва тĕпчеççĕ, парăмсен тытăмне улăштармалли майсене шыраççĕ.

Алтай крайĕнчи налук инспекцийĕн пуçлăхĕ каланă тăрăх, крайра çулталăкне 45 миллион тенкĕ илекен çынсем те пур. Хальхи вăхăтра çакнашкал çынсемпе калаçу ирттереççĕ, анчах та патшалăха налук тÿлемесен чи çирĕп мерăсем йышăнма тивет.

### Нефть ытларах кăларма тытăнĕç

Çак кунсенче Байкитра (Эвенки автономи округĕ) Раççейри нефть компанийĕсен пуçлăхĕсем Эвенкин кăнтăр тăрăхĕнче нефть тупнă малашлăхлă вырăнсемпе усă курмалли майсене сÿтсе явнă. Юрубчено-Тохомск тăрăхĕнче çĕр-çĕр миллион тонна нефть шыраса тупнă. Анчах та çак вырăн аслă транспорт çулĕсенчен аякра пулни тата инфратытăм çителĕксĕр аталаннă пирки нефть кăларма укçа-тенкĕ нумай уйăрма тивет.

Ӗҫ коллективӗсенче

# Пӗрле килӗштерсе ӗҫлемелле

Общество директорӗ А.С.Насолдин хӑйӗн отчетлӑ докладӗнче предприяти пӗрремӗш ҫур ҫулта мӗнле ӗҫленине ку е тепӗр цифра кӑтартӑвӗсене икӗ тапхӑрпа илсе кӑтартрӗ: НУРБ вӑхӑтӗнче тата ӑна ҫӗнӗрен йӗркеленӗ хыҫҫӑн. Ҫакна ӑнланмалла ӗнтӗ, мӗншӗн тесен пӗлтӗр кунта пысӑк улшӑнусем пулнӑ: Нурлатри сӑнавлӑ пӑралу управленине "Татнефть" АО уйрӑлса тухнӑ предприятийӗ - "Татнефть - Нурлатнефтешырав" тулли мар явап тытакан общество туса хунӑ. Ҫакӑн пек структурӑпа ӗҫлени чылай усӑллӑ пулин те, хӑйтӗлленлӗх енчен пӑхсан, уйрӑмах финанс ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе, нефтяниксен прависем пурпӗрех чакнӑ. Пӑхӑнса тӑракан "Татнефть" предприятисӗр пуҫне, рынок хутшӑнӑвӗсене хӑнӑхнӑ тата уйрӑм ултӑ заказчик пур.

Кӑҫалхи пӗрремӗш ҫур ҫулта пурӗ 56.138 метр пӑраланӑ (ку иртнӗ ҫулхи шайӑн 114,3 проценчӗ) пулсан, вӗсенчен ҫурри ҫеҫ "Татнефть" заказӗ шутланать. Хута янӑ 36 скважинӑран 16-шне вӗсем ытти заказчиксем валли пӑраланӑ. Халь рынок экономикин условийӗсенче тӳлеме пултаракан клиентсемпе ӗҫлени усӑллӑ пулнине кашни лайӑх ӑнланать, ҫавӑнпа та Нурлатри пӑралуҫӑсем малашне уйрӑм заказчиксен шучӗ икӗ, виҫӗ хут ӳсессе шанаҫҫӗ. Анчах та кунта та йывӑрлӑхсем пур, мӗншӗн тесен, шалти рынокра расчетсен 80 процентне бартерла майпа тӑваҫҫӗ.

Апла пулин те, нефть шыравҫисем ҫӳлерех асӑннӑ тата ытти йывӑрлӑхсене пӑхмасӑр, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме тӑрӑшаҫҫӗ. Сӑмахран, долотопа пӗлтӗр 126 метр иртнӗ пулсан, кӑҫал 152,2 метр шутланать. Ту породисен 100 метрне ӗҫлесе хатӗрлессин вӑхӑчӗ те икӗ хута яхӑн чакнӑ. Чӑнах та, пӑралу бригадисен тӗп кӑтартӑвӗсенче уйрӑмлӑх сахал мар, ӑна пӗтерес тӗллевпе предприятире бригадӑсемпе цехсене кӗҫӗн хуҫалӑх расчечӗ ҫине куҫарма тытӑннӑ. Урӑхла каласан, вӗсен пӑраланӑ тата ытти ӗҫсене пурнӑҫланӑ чухне тухнӑ тӑкаксене сметӑна тӗпе хурса шутлаҫҫӗ. Бригада ҫав суммӑран ытлашши тӑкакламасан, пӗр йышши ӗҫ укҫи илет, перекетлӗ пулсан вара ҫак суммӑна коллектива параҫҫӗ. Производствӑри кӑтартусем тӗрлӗ пулни, ҫав вӑхӑтрах ӗҫ укҫинчи уйрӑмлӑх та ӗҫре усӑ курман резервсем пуррине ҫирӗплетет. Бригадӑра рентабеллӗх вӑтамран 11,5 процент шутланать пулсан, хӑшӗнче вӑл 22 процент ытларах, анчах та тӑкаклӑ бригадӑсем те пур. Общество директорӗ хӑйӗн калаҫӑвӗнче ҫаплах автотрактор цехӗнче ӗҫ укҫине хӑш-пӗр йышши техника пурнӑҫланӑ ӗҫ калӑпӑшне шута илсе тӳлессине пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе ӗҫлемеллине палӑртса хӑварчӗ.

Пурнӑҫланӑ ӗҫ калӑпӑшӗпе ӗҫ укҫи килӗшсе тӑтӑр тесе кӑҫал специалистсемпе инженерсене тата ытти ӗҫченсене аттестаци ирттернӗ, вӗсен результачӗсем вара шухӑша янӑ. Хӑшпӗр специалистсен професси пӗлӗвӗ ҫитменни те пысӑк пӗлтерӗшлӗ, вӗсен ӗҫе усӑллӑ йӗркелессишӗн тӑрӑшмалла вӗт.

Директор унсӑр пуҫне, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерессинче усӑ курман ытти чылай резервсем пуррине палӑртса, коллектива, ӗҫ калӑпӑшне сыхласа хӑварма икӗ ҫулйӗртен пӗрне суйласа илсе, ӑна малалла лайӑхлатса пымалла е ытти ӗҫсене алла илсе, хамӑрӑн продукципе рынока тухмалли ҫул-йӗрсем шырамалла, е ҫак ик ҫул-йӗрӗн чи лайӑх енӗсемпе усӑ курмалла терӗ. Ку енӗпе пӗлтӗр хула ҫыннисене ӗҫмелли шывпа тивӗҫтерессинче Нурлатри пӑралуҫӑсем мӗнле пысӑк, пӗлтерӗшлӗ заказ пурнӑҫлани ҫинчен эпир пӗлетпӗр, малашне те рынок экономикин йывӑр условийӗсенче вӗсем ҫухалса каймасса шанас килет. Тата ҫакӑн ҫумне ҫакна та хушмалла, коллективӑн ырӑ та ҫирӗп йӑлайӗркисем пур, вӗсене темиҫе ӗҫ династийӗ малалла тӑсӗҫ. Ҫав вӑхӑтрах кунта ӗҫ ҫыннине хаклама пӗлеҫҫӗ. Пирӗн патра ӗҫ сыхлавӗ, унӑн условийӗсене лайӑхлатма укҫа-тенкӗ нумай тӑкаклаҫҫӗ, терӗ директор А.С.Насолдин. Профсоюз комитечӗн председателӗ Г.Ш.Сулейманов, пухура коллективлӑ договора пурнӑҫлани ҫинчен пӗлтернӗскер, сӑнавҫӑсен пурлӑх интересӗсене палӑртакан тӗп пункчӗсене пурнӑҫлас ыйтусем ҫинче чарӑнса тӑчӗ. Тӗрӗс ӗнтӗ, рынокра нефть хакӗсем ӳкни ӗҫшӗн тӳлессине тата ытти социаллӑ тӳлевсене чылай чакарнӑ. Буровойсенче пӑралуҫӑсене ӗҫ укҫи шучӗпе апатлантарни йӳнерех, ҫакна пӑрахӑҫлама шутламаҫҫӗ. Анчах юлашки вӑхӑтра ҫынсем хӑйсен тивӗҫӗсене сӳрӗккӗн пурнӑҫлани пӑшӑрхантарать. Административлӑ отпусксене тӑтӑшах панине пӑхмасӑр, ӗҫ пулманнипе уйӑхуйӑхӗпе ӗҫлеменнисем те нумай, ҫитменнине вӗсенчен чылайӑшӗ, предприятире ӗҫлеме тата этем сывлӑхне сыхлама мӗнпур условисем туса панӑ пулин те, ҫакна шута илмеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та пухура малашне ҫак ыйтӑва администраци те, профсоюз комитечӗ те тӗп тимлӗх уйӑрмаллине палӑртрӗҫ.

Тӗрӗс ӗнтӗ, палӑртнӑ задачӑна икӗ енӗ те ертӳҫӗсем те, рабочисем те пурнӑҫлама пуҫӑнсан тата кашни предприяти тухӑҫлӑхӗшӗн, унӑн паянхи тата ыранхи кунӗшӗн тӑрӑшсан кӑна ӑна пурнӑҫа кӗртме пулать.

**Р.ГИЛЬМУТДИНОВ.**



*Микушкинсене Пӳлеркӳлӗнче пурте пӗлеҫҫӗ. Хӑть хӑшне ил - Владимира, Михаила, Александра - вӗсем пурте тӑрӑшуллӑскерсем тата хуҫалӑхра лайӑх шутра. Ҫак ӳкерчӗкре эсир Владимир Прокофьевича куратӑр, вӑл чылай вӑхӑт хушши трактор бригадин бригадирӗ пулса вӑй хунӑ. Вӑл ӗҫленӗ вӑхӑтра 9 ертӳҫӗ улшӑннӑ. Эпир унран: вӗсенчен хӑшӗнпе ӗҫлеме ҫӑмӑлрахчӗ? - тесе ыйтрӑмӑр та вӑл: "Пурте ӗҫленине юрататчӗҫ", - терӗ. Владимир Прокофьевич ачисене ҫӗре, ӗҫе юратма вӗрентнӗ. Ывӑлӗ Александр та тракторпа ӗҫлет, вӑл тытӑннӑ ӗҫе яланах вӗҫне ҫитерет.*

*Халь Владимир Прокофьевич трактор бригадинче слесарь тивӗҫӗсене пурнӑҫлать, кӗскен каласан, техника юсавлӑ пултӑр тесе тӑрӑшать. Выльӑхсем валли апат хатӗрленӗ чухне те вӑл механизаторсене пысӑк пулӑшу панӑ.*

*Пирӗн фотокорреспондент Н.Азизов В.П.Микушкина шӑп кӑна утӑ хатӗрленӗ вӑхӑтра ӳкерсе илнӗ.*

# Ҫӗнӗ закон йышӑннӑ

Нумаях пулмасть центрта тухса тӑракан хаҫатсенче Раҫҫей Федерацийӗн "Ҫар ҫыннисен статусӗ ҫинчен" ҫӗнӗ закон пичетленӗ.

Ӑна Патшалӑх Думи 1998 ҫулхи мартӑн 6-мӗшӗнче йышӑннӑ та 1998 ҫулхи майӑн 27-мӗшӗнче Раҫҫей Федерацийӗн президенчӗ алӑ пуснӑ.

1993 ҫулта йышӑннӑ "Ҫар ҫыннисен статусӗ ҫинчен" кивӗ закон 5 ҫул хушшинче мораль енчен кивелнӗ, хальхи вӑхӑт требованийӗсемпе килӗшсе тӑмасть.

Ҫӗнӗ Федераллӑ Закон Раҫҫей Федерацийӗн Конституцийӗпе килӗшӳллӗн ҫар ҫыннисен прависене, ирӗкне, тивӗҫне тата яваплӑхне, ҫаплах ҫар ҫыннисене, запаса тухнӑ граждансемпе вӗсен ҫемйисене право тата социаллӑ хӳтлӗх тӗлӗшпе патшалӑх политикин никӗсӗсене палӑртать.

Кашни гражданин, ҫар службине каймалла ҫеҫ-и-ха вӑл е халь службӑра тӑрать-и, е ҫар тивӗҫне пурнӑҫласа запаса кайнӑ-и, ӑна хумхантаракан ыйтусем ҫине ҫак Законта хурав тупӗ. Ҫар ҫыннисен ҫемйисен членӗсем, Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ ветеранӗсем, ытти патшалӑх территорийӗнчи ҫапӑҫусене хутшӑннӑ ветерансем, ҫар службин ветеранӗсем тата чрезвычайлӑ лару-тӑру условийӗсенче, ҫаплах хӗҫпӑшаллӑ хирӗҫӳсенче ҫар службин тивӗҫне пурнӑҫланӑ ветерансем ҫак Законтан хӑйсене тивӗҫлӗ ҫӑмӑллӑхсене, компенсацисене пӗлӗҫ.

Эпир демократи обществинче, право патшалӑхӗнче пурӑннине ҫирӗплетнӗ пек ҫӗнӗ Закон ҫар ҫыннисен, запаса тухнӑ граждансемпе вӗсен ҫемйисен прависемпе ирӗклӗхне анлӑн уҫса кӑтартать. Ку вӑл ҫар ҫыннисен ирӗклӗхне, чысӗпе тивӗҫне, ирӗклӗн куҫса ҫӳреме тата пурӑнмалли вырӑна суйласа илессин, ирӗклӗн калаҫассин правине, пухусене митингсене, демонстрацисене хутшӑнма ирӗк паракан правона, совеҫпе тӗн ирӗклӗхне, патшалӑх тата обществӑлла пӗрлешӳсен ӗҫӗсене илсе пырассине хутшӑнма ирӗк паракан правона, ӗҫпе кану правине, ҫурт-йӗр правине, сывлӑх сыхлавӗн тата медицина пулӑшӑвӗн правине, харпӑрлӑх тата налук ҫӑмӑллӑхӗсен правине, ҫар ҫыннисен страховани гарантине тата сиен тӳснине саплаштарасси правона, вӗренӳпе культура правине, апатҫимӗҫпе тата япаласемпе, укҫа-тенкӗпе тивӗҫтерес правона, юридически пулӑшу тата нотариус ӗҫӗсене пурнӑҫлама ирӗк паракан правона хӳтӗлесси.

Ҫар службин тивӗҫӗсене чрезвычайлӑ лару-тӑрура тата хӗҫпӑшаллӑ ҫапӑҫусем вӑхӑтӗнче иртterекен ҫар ҫыннисемпе вӗсен ҫемйисене хушса компенсацисемпе ҫӑмӑллӑхсем пама пӑхса хӑварнӑ.

Ҫакӑн пек пысӑк право тата ирӗк парса, Закон ҫар ҫыннисене пӗрлехи, должность тата ятарлӑ тивӗҫсем, ҫаплах правона пӑснӑшӑн яваплӑх палӑртать.

Закон 1998 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен вӑя кӗнӗ, ӑна ӑнӑҫлӑ ӗҫлесе усӑ пама сунас килет.

**И.ХАФИЗУЛЛИН,**
**районти ҫар комиссарӗн ҫумӗ, подполковник.**

КВН * КВН

## *Кислев - Киклĕ*

КВН * КВН

# "Ялта кам хаваслă та ирĕккĕн пурăнать?"










Кислевпе Киклĕ ялĕсен представителĕсем хушшинче хаваслă тата тавçăрулли-сен клубĕн вăййи иртесси çинчен пĕлсенех, икĕ енĕ те тĕлпулу тĕлне хатĕрленме тытăнчĕ.

Ялта маларах кун пекки пулманнипе Киклĕ ялĕнчи культура çуртне халăх питĕ нумай пуçтараннăччĕ. Акă хумханулла минутсем çитрĕç, вăййа пурте хатĕр: КВН ертсе пыракан Рамис Бикинеев, жюри членĕсем, командăсем, вĕсемшĕн пăшăрханакансем - пурте хăйсен вырăнĕсене йышăнчĕç. Пĕр енче кислевсем - "Чишма" команда, тепĕр енче - киклĕсем - "Кычыткан" команда. Вĕсенчен пĕрремĕшне эпир лайăх пĕлекен, сăмах ăсти Гулюса Нугаева ертсе пычĕ, киклĕсем Ринат Мугайнутдинов ертсе пынипе тухрĕç - вăл хăйсен ялĕнчи паттăр тата питĕ лайăх купăсçă, кĕскен каласан, ялти пĕрремĕш каччă. Икĕ команда та хăйсем тавçăрулла та ăслă пулнине кăтартрĕç, хаваслă та кăсăк вылярĕç.





Хăйсен "килти ĕçĕсенче" вĕсем ялти кулленхи пурнăçа питĕ уççăн та ăста кăтартса пачĕç. Пуçтараннисем çав кун çу вăхăтĕнче кĕтÿçсĕр юлнă сурăхсен çăхавне итлерĕç.

Киклĕ командин вăййăçисем те актуаллă ыйтусем сахал мар çĕклерĕç: ку вăл, Çарăмсан çывăхĕнче пурăнса шывсăр нушаланни, çĕмĕрĕлнĕ трактор патĕнче ÿсĕр механизатор топливо çукки пирки ÿпкелешни. Икĕ командăна та укçасăрлăх тата ăçта пăхнă çавăнта пасар пулни те пăшăрхантарни палăрчĕ. Çапла, çак хаваслă вăйăра эпир хамăра аяккинчен курнă пек туйăнчĕ, хамăра палласа, чунчĕререн култăмăр, хăшĕпĕри хăйне валли вывод турĕ пулĕ.

Çак тĕлпулăва Анат Нурлат команди те килнĕччĕ - вĕсем "парне" вырăнне "акатуй" представленине хатĕрленĕччĕ. Вăйă музыка конкурсĕпе вĕçленчĕ. Кислев хĕрĕсем юрлани кулленхи ĕç çинчен кăшт мантарчĕ, Киклĕ ялĕнчи Залия Фасхутдинова çĕр, юрату, ыркăмăллăх, савăнăç çинчен юрларĕ.





Вăйă вĕçленчĕ, жюри "Чишма" команда членĕсене çĕнтернĕ ятпа саламларĕ. Ял çыннисемшĕн çак конкурс чăн-чăн уяв пекех пулчĕ. Çавăнпа та КВН пуçарусисене вĕсен ятĕнчен тав тăвас килет.

Р.МАСЛАХОВА.

Н.АЗИЗОВ
ÿкерчĕкĕсем.

## Малтанхи пекех усă курма пулать

**- Хĕрĕм, çак укçана мĕншĕн манран магазинра илмерĕç, терĕ пире пĕр ватă хĕрарăм ал тупанĕ çинчи сарă тĕслĕ вак укçана, çав шутра 1961 тата 1993 çулта кăларнисене кăтартса. Чăнах та, çакăн пек ыйтусене часчасах илтме пулать. Вĕсем çине хурав тупас тесе эпир Нурлатри РКЦ начальникĕнчен А.К.Сафиуллинаран ыйтса пĕлме шутларăмăр. Акă вăл пире мĕнле хурав пачĕ.**

- Пирĕн патра çакăн пек ыйтупа ватă çынсем сахал мар пулаççĕ. Вак укçана СССР Патшалăх банкĕ 1961, 1991 çулсенче тата Раççей банкĕ 1992, 1993 çулсенче кăларнисене пĕр чăрмавсăр йышăнмалла. РФ Президенчĕн 1997 çулхи августăн 4-мĕшĕнче "Раççейри укçа паллисен тата хаксен масштабĕ улшăнни çинчен" йышăннă 822-мĕш номерлĕ Указĕпе килĕшÿллĕн çак укçа 1998 çул вĕçлениччен РФ территорийĕнче законлă тÿлев хатĕрĕ шутланать.


Афган поселокĕнче строительство материалĕсемлĕ участок сутăнать, хаклă мар. Куйбышев урамĕнчи виçĕ пÿлĕмлĕ хваттере лайăхлатнă планировкăпа тунă 3 пÿлĕмлĕ хваттерпе (хушса тÿлесе) улăштаратпăр. Ытти вариантсем те пулма пултараççĕ. 2-15-42 номерпе 18 сехет хыççăн шăнкăравламалла.

* * *

Заинск-2 хулинчи икĕ пÿлĕмлĕ хваттере Нурлатри икĕ пÿлĕмлĕ хваттерпе улăштаратпăр. Адрес: Советская урамĕ, 187-79.

* * *

## Пĕлтерÿсем

1986 çулта туса кăларнă ВАЗ-21063 автомашина сутăнать. Телефон: 5-17-16.

* * *

Хула варринчи икĕ пÿлĕмлĕ хваттер васкавлă сутăнать. Телефон: 5-24-59.

* * *

Хула варринчи икĕ пÿлĕмлĕ хваттер сутăнать. Нÿхреплĕ сарай пур. Козлов урамĕ, 14-13.

* * *

Компьютер сутатпăр, хаклă мар. 5-36-50 номерпе 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.

* * *

"ВИГСТМ" ОАО филиалĕн Нурлатри хуçалăх расчечĕпе ĕçлекен строительствăна монтаж участокне квалификациллĕ сантехниксем, электрогазосварщиксем, электриксем кирлĕ. Адрес: Советская урамĕ, 145.

* * *

1,35х6м. профнастил (25 лист) сутатпăр. Киров урамĕнчи 10-мĕш çуртра ыйтса пĕлмелле.


## Виçĕ сменăпа

Районта ĕçе вырнаçтаракан бюро çумĕнче кăçал йĕркеленнĕ ĕç биржи урлă шкултa вĕренекенсене çуллахи каникул вăхăтĕнче ĕçпе тивĕçтернĕ. Хулари 4-мĕш номерлĕ шкулта икĕ сменăра 14-шар ача ĕçленĕ, вĕсем шкулта юсав ĕçĕсем ирттернĕ, шефсен -"Нурлатнефть" НГДУ объекчĕсене йĕркене кĕртме пулăшнă. Августăн 1-мĕшĕнчен ĕç лагерĕнче виççĕмĕш смена пуçланать, унта та çавăн чухлĕ ача вăй хума кăмăл тунă.

# Буржуй

## (калав)

Анлă хăмач çине чавса тăршшĕ шурă саспаллисемпе çырнă “Честь и слава Советскому Учителю!”текен лозунг сценăна урлă каçах хĕретсе тăрать. Ара, хĕрĕхмĕш çулсем вĕçĕнче Нурлат хулинчи сарай пек пысăк йывăç клубра/ĕлĕк ăна нардом - халăх çурчĕ тетчĕç/ учительсен январьти конференцийĕ пырать. Кăрлач тулта кăна мар, клубра та ташлаттарасшăн, анчах кунта тĕпĕртетме юрамасть. Чăтас пулать.

Вăтăрсенчен иртнĕ шуранка, типшĕм учитель кĕтесри çавракa кăмака çумне пичĕ-мĕнĕпех çыпçăнса тăнă. Виçĕ пўрнеллĕ сылтăм аллипе ăшшине йăлтах çухатса пĕтереймен кăмакана çинесинех ачашлать. Вăрçă суранĕсем çак мĕскĕне çаплах канăç паманни курăнать.

Роно заведующийĕ хăйĕн докладĕнче Киреметри вăтам шкулта ĕç-пуç начар пыни çинче чаранса тăчĕ. Уйрăмах чăваш тата тутар класĕсенче вырăс чĕлхипе ĕлкĕрсе пыракансем пурĕ те çитмĕл процент кăна. Çĕр ачаран вăтăрăшĕ мĕн сăлтавпа ĕлкĕрсе пыраймасть? Мĕн çитмест? Ăс-тăнран катăк-и вĕсем е урăххи чăрмантарать? Çак ыйтăва темиçе хутчен сўтсе явнă хыççăн вырăс чĕлхипе вĕрентекен учителе президиум вырăнаçнă сцена çине чĕнчĕç.

Пăхатăп та, паçăр кăмака ăшшине хăй çумне пуçтаракан çын уксахласа сцена çине хăпарса тăчĕ. Пĕрре вăрăм сĕтел хушшинче ларакан йышлă президиума, тепре залри халăха саламласа пуç тайрĕ. Уринче ун Йăван ĕмĕрĕнчи хыçне сăран çĕлесе тĕп хунă сăрă çăм атă, çийĕнче чавсисене сапласа пĕтернĕ, ситрелнĕ аркине темиçе хутчен те каса-каса тикĕсленипе кĕскелсе юлнă салтак шинелĕ. Шатра алшăллипе чĕркенĕ мăйĕ пăру хўринчен те çинçерех курăнать. “Тăванăм, миçе кун çимен-ши эсĕ?” текен ыйту пуçра хăй тĕллĕнех вĕлтлетсе иртрĕ.

- Сидоров, ачусем мĕншĕн япăх вĕренеççĕ? - ыйтрĕ президиумра лараканнисенчен пĕри.

- Начар хатĕрленеççĕ. Киле панă ĕçсене те часчасах тумасăр пыраççĕ.

- Килĕсене каймалла, ашшĕ-амăшĕсем урлă хĕсмелле! - вĕрентсе каларĕ тепри.

- Кашни эрнерех пулатăп. Час-часах ашшĕамăшĕсем те шкула пыраççĕ, урокра лараççĕ...

- Ĕлкĕрсе пырайманнисене кашни кун урок хыççăн хăвармалла, вăхăта хĕрхенмелле мар., - сĕнчĕ виççĕмĕшĕ.

- Вăл çапла. Анчах та ачасем малахайпа, алсишпе лараççĕ. Урок пĕтнĕ çĕре шăнса кăвакарсах каяççĕ. Урок хыççăн мар, çўхерех тăхăннисем юлашки уроксенченех тараççĕ.

- Ку сăлтав мар, - ура çине тăчĕ райком секретарĕ Аляпсин. - Ачасем ĕлкĕрсе пыраймании эсир урока кирлĕ пек хатĕрленсе пыманнине тата сирĕн педагогика ăсталăхĕ çитменнине çеç пĕлтерет. Пушкин, Толстой е Горький чĕлхипе ачасене интереслентерме пĕлместĕр пулсан, эсир мĕнле учитель? Епле сире институтран диплом парса кăларнă?... Хуçалăхăрта мĕн тытатăр? - кĕтмен çĕртен ыйтрĕ район хуçи.

- Ĕне, икĕ сурăх та чăхсем...

- Ĕне?! - президиумра ларакансем пĕр-пĕрин çине темĕнле пысăк открыти тунă пек пăхса илчĕç.

Калас пулать, вăрçă хыççăнхи çулсенче ĕне тытма вăй çитерекен учитель сахал пулнă, нумайăшĕ качака та туянайман. Ĕнине тытас пулсан та, кашни çулах патшалăха икçĕр-икçĕр аллă литр сĕт памаллаччĕ. Çак парăма вăхăтлă татса парайманнисене ял Совечĕн председателĕ вырăнти радиопа ятран каласа кашни эрнерех халăх умĕнче намăслантаратчĕ.

- Манăн пилĕк ача, арăм чирлĕ. Хамăн та сывлăх çавнашкал. Сĕтсĕр пачах пурăнаймастпăр, - пысăк айăпа кĕнĕшĕн каçару ыйтнă пек сăмахларĕ инвалид.

- Илтрĕр-и? - халăх çине пăхса кăшкăрчĕ Аляпсин. - Сидоров ĕне тытать. Шкултан таврăнсан, унăн ĕне пăхмалла. Каç пулсан колхоза утă-улăм вăрлама каймалла. Ир тăрсан, ĕнине сумалла, çитерсе- шăварса хăвармалла. Хăçан уроксене хатĕрленет? Хăйĕн ăсталăхне ўстерес енĕпе хăçан ĕçлет, хăш вăхăтра çĕнĕ произведенисем вулать? Шкулшăн, ачасемшĕн унăн сĕмех вăхăт çук. Вăл пĕтĕмпех хуçалăх ĕçне путнă, вăл хăй интересĕпе çеç пурăнакан "мелкий собственник". Вăл чăн-чăн буржуя çаврăннă.

Çак сăмахсене илтсен, пĕр эпĕ çеç мар, залра темиçе çын ахăлтатсах кулса ячĕ те çавăнтах лăпланчĕ. Эпĕ пите алсапа хупларăм те ниепле те чарăнаймастăп.

- Çитĕ! - хытах тĕкрĕ мана чавсипе юнашар ларакан Кондратий Алексеевич. - Эсĕ пĕчĕккĕ, курăнмастăн. Сан пирки эпĕ сăмаха кĕме пултарăп.

- Ара, буржуй çапла пулать-им? - ыйтатăп аран сывлăш çавăрса. - Пăх-ха эсĕ, пăх лайăххрах! - тетĕп, сцена çинчен аран лăкăштатса анакан мĕскĕн учитель çине кăтартса.

- Тата мĕнле пултăр? Ку капитализмăн мар, пăрлетари буржуйĕ, - татса хучĕ Савельев. Чун кăчăкĕ çĕнĕрен хускалса кайрĕ.

... Сидорова выговор пачĕç. Вĕренў çулне çĕр процентлă ĕлкĕрўпе вĕçлеймесен, ĕçрен кăларса ярас пирки асăрхаттарчĕç.

... Унтанпа çур ĕмĕр иртрĕ. Апла пулин те, телевизорпа “смехопанорама” кăтартма тытăнсан, Петросянпа юнашар Аляпсинпа Сидоров тухса тăрассăнах туйăнать.

**Василий ОРЛОВ.**

# Пĕлтерўсем

*“Москвич-412” васкавлă сутăнать, хаклă мар. Телефон: 5-39-69.*

* * *

*50мм. диаметрлă шыв пăрăхĕсем, сетка “рабица” - 30 метр сутатпăр. Телефон: 5-35-81, хăть хăш вăхăтра та ыйтса пĕлме пулать.*

* * *

*Апат-çимĕç комбиначĕ патĕнче нўхреплĕ лайăх гараж сутăнать. Телефон: 2-17-32.*

* * *

*Çыранçи Чаллăри икĕ пўлĕмлĕ хваттере Нурлатрипе улăштаратпăр. Вариантсем пулма пултараççĕ. Адрес: М.Джалиль урамĕ, 9.*

* * *

*2-мĕш номерлĕ вăтам шкул Олег Николаевич Шаровов ячĕпе панă Б серillĕ 547885 номерлĕ çухалнă аттестата тĕрĕс мар тесе шутламалла.*

* * *

*“Минск” мотоцикл сутатпăр. Адрес: Циолковский урамĕ, 44.*

* * *

*Пĕчĕк çемье пурăнмалли хваттер сутăнать, пĕрлехи лаптăкĕ 35,4 тăваткал метр. Посредникăн телефонĕ: 5-19-48.*

* * *

*Афган поселокĕнчи шалти ĕçсене туса пĕтермен çурт сутăнать. Участока карта тытнă, гараж пур. Телефонсем: 5-11-42 е 2-24-12.*

* * *

*Кăрмăш патĕнчи виçĕ пўлĕмлĕ хваттере 1 пўлĕмлипе (хушса тўлесе) улăштаратпăр (иккĕмĕш е виççĕмĕш хутра пулсан лайăх пулмалла), сахăр завочĕпе чугун çул поселокĕнчисене сĕнмелле мар. Телефон: 5-16-42, 18.00 сехет хыççăн.*

* * *

*“Термикс” газ хуранĕ сутăнать, хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Адрес: Школьная урамĕ, 13-3, 17.00 сехет хыççăн.*

* * *

*1986 çулта туса кăларнă ВАЗ-2121 “Нива” сутатпăр, лайăх шайра. Пухтел ялĕнче августăн 1-мĕшĕнче Семен Жуковран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Çĕнĕ Иглаелĕнчи вăтам шкул Гулия Рустемовна Губайдуллина ячĕпе панă 694950 номерлĕ çухатнă аттестата тĕрĕс мар тесе шутламалла.*

* * *

*1996 çулта туса кăларнă ВАЗ-21093 сутăнать, шурă тĕслĕ, 41 пин километр çўренĕ, лайăх шайра, хаклă мар, апат-çимĕçпе бартер тума пулать. Кивĕ Чаллăра Николай Николаевич Захаровран ыйтса пĕлмелле. Телефон: 3-12-27.*

* * *

*Уйрăм çурта 2 тата 1 пўлĕмлĕ хваттерсемпе улăштаратпăр. Газпа ăшăтмалла, 8 сотка участок, мунча (газ кĕртнĕ), кирпĕчрен тунă гараж, 2 сарай пур, шыв кĕртнĕ, канализаци тунă. Ытти вариантсем те пулма пултараççĕ. 5-16-63 номерпе 17.30 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*Апат-çимĕç комбинатне хирĕç нўхреплĕ лайăх гараж сутăнать. Адрес: Гиматдинов урамĕ, 51-16, телефон: 2-24-66.*

* * *

*Афган поселокĕнче никĕслĕ участок сутăнать, пусă пур. Телефонсем: 5-39-52, 5-15-49.*

* * *

*ДВП (1,70х2,75), пĕр лисчĕ 28 тенкĕ; 4мм. кĕленче (1,30х1,60) 40 тенкĕ; рубероид - 55 тенкĕ, линолеум сутатпăр. Телефон: 2-24-03.*



*Çу илемĕ.*

# Пĕлтерўсем

**“Болгар” магазинта мĕнпур йышши сĕт продукчĕсем тата çăкăр сутаççĕ. Адрес: “Яшьлек” кафе, 1-мĕш хут.**

* * *

**Керамзит блокĕсем сутатпăр, 1 штукĕ - 3 тенкĕ. Адрес: Димитровград хули, “Алиса” магазин хыçĕнче Сельхозхимин бази пулнăскер. Хăть мĕнле майпа та тўлеме, бартер тума та пулать, леçсех паратпăр. Телефон (84235) 3-06-41.**

* * *

**40 пин километр çўренĕ ВАЗ-212136, ЮМЗ-6 трактор, “ИФА-25” тиев фургонĕ, “Газель” класлă дизель сутатпăр, вариантсем пулма пултараççĕ. Телефон: 2-26-95.**

* * *

**Мрамор тĕпренчĕкĕсенчен тунă палăксем сутатăп, çырсан 450-500 тенкĕ, хура мрамор çине портрет вырнаçтарсан - 800-1000 тенкĕ, 1-2 кун хушшинче хатĕр пулать. Адрес: Ленинградская урамĕ, 14.**

* * *

**5 тата 2 хутчен пăрулану ĕнесем сутатпăр. Бикулово ялĕнче Хасибулла Валиуллинран ыйтса пĕлмелле. Телефон: 2-33-66.**

**Хресченсемпе фермерсен хуçалăхĕсен “Игенче” ассоциацийĕ халăха, предприятисемпе организацисене 20х40см. калăпăшлă керамзит блокĕсем сутать, пĕр штукĕ 4 тенкĕ. Тўрех укçа тўлесе тата бартерла майпа та туянма пулать.**

**Ульяновскри тир фабрики районти культура çуртĕнче июлĕн 31-мĕшĕнче ирхине 9 сехетрен тытăнса 16 сехетчен атă-пушмак сутать.**

## АСĂНĂР

**1998 çулхи июлĕн 31-мĕшĕнче пирĕн юратнă шăллăм Анатолий Александрович ИЛЬИН вилнĕренпе 10 çул тата атте Александр Егорович ИЛЬИН вилнĕренпе 6 çул çитет. Пĕлнисем вĕсене ырă сăмахпа асăнăр. Йывăр тăпри çăмăл пултăр.**

**ИЛЬИНСЕМ.**


**Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.**

**Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.**

**Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ**

**Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.**

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

**Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.**

**Регистрациленĕ номерĕ 34.**

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 892. 3116